Арк. Солăттăв

Ф. П. Павлăв пултаруллăхĕ

Ăна аҫăнса иртернĕ хуйхăллă пухура тунă доклат

Ф. П. Павлăв

I

Фетăр Павлăвиђ Павлăв вăхăтсăр вилнипе епĕр мусăк фронтĕнђи пĕр паллă, пултараллă ĕçлекене çухатрăмăр. Унăн мусăк фронтĕнђе нумай çулсем хушши хастарлă ĕçлесе тунă пысăк ĕçĕсене, унăн пĕтĕм пултаруллăхне мĕн пур тăрăнăшĕ—сарлакăшĕпех хаљ, тĕплĕн тĕпђесе тухмасăр, хак пама йăвăр пулин те—çав сарлака, тĕрлĕ йенлĕ пултаруллăхăн тĕп çулĕйĕрне, тĕп шăнăрĕсене талккишĕперех те пулин палăртса, ăнласа илни кирлĕ.

Ф. П. Павлăв Октăпĕр револђутсине йăшăнса, унпа çийелтен килĕшекен анђах мар,—вăл çак аслă револђутсире çĕнтерсе илнисене çирĕплетессишĕн пĕтĕм пĕлӳне, вăйне парса совет влаçĕпе пĕрле хастарлă ĕçлекен ĕç интеликентсийĕ ĕретĕнђе тăракан паллă ăста пулнă. Çакна вăл револђутсин малтанхи çулĕсенђех йалта уђђитлĕре, халăх сутйинђе тăрса ĕçлени, 1920-мĕш çулсенђен пуçласа—Шупашкарти петтехнĕккăмра, оплăçри сутпайĕнђе, кайарахпа—Аслă сутра, Çĕрĕç кăмиссариатĕнђе, Ђаваш çĕршывне вĕренекен ушкăнра, ђи йулашки иквиç çул хушши—ђăваш мусăк технĕккăмĕнђе хастарлă ĕçленисем кăтартаççĕ.

Çакнах вăл мусăк ĕçне,—1912-мĕш çулсенђе ĕçлеме пуçланăскерне,—Октăпĕр револђутси уçса панă сарлака çул çинђе еçхалăхĕ хушшине сарас тĕлĕшпе, ђăваш мусăкне тĕплĕрех вĕренсе, çав халăх пултаруллăхĕн никĕсĕ çинђе ăна тарăнлатса, илемлетсе,—çĕнĕ йурăсем, çĕнĕ кĕвĕсем тăвас тĕлĕшпе тăрăшсах ĕçленисем те лайăх кăтартса параççĕ.

II

Ф. П. Павлăв, ђи малтан, халăх йуррисене, халăх пултаруллăхне нумай пухакансенђен пĕри („Ђăваш йуррисем“—170 кĕвĕ, 1700 йахăн йурă пухса тунă алçырăвĕ). Вăл ђăваш йуррисене ђи пуçласа хитрелетекен, кармонилекен ăстаçă („Сăрнай“—хитрелетнĕ йурăсен пуххи, 1924 çулта тухнă; „Çĕнĕ йурăсем“—виçĕ автăр пĕрле Октăпĕр револђутси 10 çул тултарнă тĕле кăларнă, т. ыт. те. Çак пысăк ĕçре унăн мусăк пултаруллăхĕ, компоçиттăр ăсталăхĕ, вăл хăйĕн ĕçне тăрăшса, йуратса, тĕплĕн туни пит лайăх, пит уççăн палăрса тăрат. Кун пирки пирĕн компоçиттăрсем, мусăк ăстисем хăйсен сăмахне тĕплĕрех калĕç.

Епĕ хаљ кунта Ф. П. Павлăвăн мусăк пултаруллăхне унăн ăшђикĕ йенђен, шухăшĕ-кăмăлĕ йенђен кĕскен çутатса парасшăн. Ф. П. Павлăв ђăваш хресђен хушшинђен тухса, хресђен пурнăçне, унăн ĕлĕкхи пусмăрти пурнăçĕн нуши-хурлăхне, унăн пурнăç йăлисене лайăх пĕлсе тăнăскер, хăйĕн йурри-сăввисенђе те, ђи малтан, вак хуçалăхлă уйрăм хресђен шухăшĕсене палăртса çырнă.

Унăн йуррисенђе пĕђђен хресђенĕн йăвăр пурнăçĕн салхуллă кĕвви-сăмахĕсем çемçен йанăраса тăраççĕ, хушăран тăсти айакри „ырă пурнăçа“ кĕтсе тăнă çĕртех, ăна кĕтсе илес шанђăка та иккĕлентерекен кĕвĕ сăмахсем илтĕнĕ-илтĕне кайаççĕ. Унăн хăйĕн шухăшĕсене палăртса çырнă (лирĕклă) йуррисемпе кĕввисенђе те çак уйрăмлăх уççăнах палăрса тăрат(„Шупашкар туйи“,„Вĕлле хурђĕ“, т. ыт. те. Ф. П. Павлăв хăйĕн проиcветенийĕсене пуринђен ытларах халăхăн ĕлĕкхи, револђутсиђенхи йурри-кĕввисен никĕсĕ çинђен гуни те çак тĕп сăлтавранах тухса тăрат. Çавăнпа епĕр ăна ђăннипех те вак хуçалăхлă уйрăм хресђен шухăшĕ-кăмăлĕсене палăртса тăракан хутошнĕк теме пултаратпăр.

Çав вăхăтрах Ф. П. Павлăв, хăйĕн пултаруллăхĕн йулашки тапхăрĕнђе,—сотсиалисăм тăвас ĕçри кĕрешӳ сатађĕсемпе тан пыма тăрăшса,—пайанхи кĕрешӳпе сыхăнса тăракан темăсене çавăрса илме, вĕсене çĕнĕ шухăш-сăмахсемпе тултарма тăрăшат („Колхос йурри“, „Хĕрлĕ салтак йурри“, „Малалла утар“, „Ай улми“.„Хĕрлĕ улах йурри “ т. ыт. те). Анђах, вĕсене вăл вĕçне çитиђђенех проллеттари итеолокийĕпе тултарса çитереймест. Хăшпĕр çĕнĕ йуррисенђи сăмахĕсем те, пуринђен те ытларах, кĕввисем —çав вак хуçалăхлă уйрăм хресђен шухăшĕ-кăмăлĕсене палăртса тăракан йурăсенђи кĕвĕсен салхулăхĕпех, çемçелĕхпех витĕнме пăхаççĕ. Çапах та, Ф. П. Павлăвăн происветенийĕсем, пĕтĕмĕшпе хресђен шухăшĕсене пит ăста маçтăрлăхпа палăртса çырнăскерсем, пирĕншĕн етнокрафи йенђен анђах мар паха,—вĕсем пуринђен ытларах ђăваш ĕçхалăхне сотсиалисăм тăвас ĕçре çĕклентерсе, вăйхăла хăпартса, малалла кайма ђĕнекен пысăк вăй та пулса тăраççĕ. Çав вăл Ф. П. Павлăв катаран, вăрăм, хăйшĕн йăвăр, çапах та тĕрĕс çулпа ђăвашсен револђутсиллĕ, çĕнĕ пурнăç тума ђĕнекен мусăкне тăвас çулпа пыма тăрăшнинђен килет. Çакна епĕр пуринђен ытларах вăл мусăк технĕккăмĕнђе ĕçлеме пуçланăранпа, пĕђђен ĕçлес çулран коллективпа (Ç. Максимăвпа, В. Воропйовпа, студентсемпе, т. ыт. те) пĕрле ĕçлес çул çине тăнă хыççăн, хăйĕн происветенийĕсене массă хушшинђе тĕрĕслесе тăрса (мусăк прикатисемпе йалсене, претприйаттисене ђас-ђас тухса çӳресе), вĕсене хаљхи çĕнĕ йурă-кĕвĕсемпе пуйанлатма тăрăшсах тытăннă хыççăн лайăхрах куратпăр. Вăл конçсерватторинђе çĕнĕ вĕренӳпе искусствăра ĕçлеме тиалекттĕкла маттериалисăм меттăђĕпе хĕçпăшалланнă хыççăн,—хăйĕн таланђĕн ђи пысăк вăйне, унăн пĕтĕм сарлакăш—тарăнăшне пролеттари мусăкĕшĕн кĕрешес ĕçре палăртмаллађђĕ. Çакна тăвас çулпа пĕр пăрăнмасăр çирĕппĕн хатĕрленсе пынă çак талантлă хутошнĕк.

Мусăк ĕçĕнђе Ф. П. Павлăв пултаруллă компоçиттăр анђах мар, вăл унта ђаплă, ăста мусăкçă та (скрипкăпа выљакан), пĕртен пĕр вăйлă хор органисаттăрĕпе тиришорĕ те пулса тăнă.

III

Ф. П. Павлăв ђăваш мусăкне çырса илекен, ăна илемлетсе кармонилекен компоçиттăр, ăста мусăкçă, тата ђаплă тиришор анђах пулман. Вăл ђăваш мусăк ĕçне аслăлăх йенђен тĕпђекенсенђен пĕри, ку тĕлĕшпе револђутси хыççăнхи вăхăтра пуçласа статйасем, кĕнекесем çырса кăларакансенђен пĕри пулнă. Унăн „Сунталра“, кăлентарсенђе, тĕрлĕ çулсенђе çапăннă статйасем çинђе („Ђаранна сас“ „Ђăваш кĕсли“, „Çырмари йурă“, „Ђăваш мусăкĕ çинђен çырнă кĕнекесем“, „Ђăваш мусăкĕ“, „Ђăваш хорĕ Мускаври йалхуçалăх выстăвккинђе“, „Хитре“ т. ыт. те) ђаранса тăмасăр, епĕр кунта унăн вырăсла çырнă „Ђăвашсемпе вĕсен йурăпа мусăк пултаруллăхĕ“ тенĕ пысăк еçĕ çинђе кăшт кăтартса парасшăн. Çак ĕç вунă кĕнеке пулса тухмаллађђĕ, унăн пирвайхи кĕнеки 1927-мĕш çулта тухнă, унта ытти 9 кĕнекин сотершанине те кĕскен кăтартса пĕлтернĕ

Çакăн тăрăх епĕр Ф. П. Павлăв ђăнласах тĕплĕ, паха ĕç çырса пама хатĕрлесе хунине куратпăр.

Малтанхи кĕнекинђе вăл ђăваш мусăкĕ çинђен, ђăваш йурри-кĕввисене ку таранђђен кам пухса, мĕнле кĕнекесем çырса хăварнине тĕпђесе тухат̆ (XVIII-мĕш ĕмĕртен пуçласа хаљхи вăхăта çитиђђен). Мусăк ĕçне ăслăлăх йенђен тĕпђес ĕçре çак кĕнеке хăйне уйрăмах та пит паха вырăнта тăрат̆, вăл унсăр пуçне Ф. П. Павлăв мусăк ĕçне пит тĕплĕн вĕренсе, тарăн тĕпђесе пынине уççăнах кăтартса парат̆.

Кĕнекен çак хаклă, паха йенĕсемпе пĕрлех, Ф. П. Павлăв ăслăлăх тĕпђев ĕçĕнђе çитменлĕхсемпе йăнăшсенђен те вĕçне çитеђђенех сыхланса тăраймаст̆. Вĕсем пуринђен ытларах тĕпђев ĕçĕнђе авттăр маркçисла, тиалекттĕкла маттериалисăм меттăт̆ĕпе çителĕклĕ таран усă курма пĕлменнинђен килеççĕ. Çавăнпа ун кĕнекинђе, ђи малтан, „суйа, итеалисăмлă опйекти-висăм“ тени маларахри вырăна тухса тăрат̆. Вăл ђăваш йурри-кĕввисем мĕнле сотсиаллă-економĕк никĕсĕсем çинђе çуралса мĕнле сăлтавсем пирки мĕнле ўсе пынине тĕплĕн татса кăтартса параймаст̆ (паллах çакна малтанхи кĕнеки тăрăх анђах татсах калама йăвăр, мĕншĕн тесен çак ыйтусене вăл хăйĕн малаллахи, хаљ çапăнса тухайман кĕнекисенђе тĕпђесе тухма палăртса хунă), унпа пĕрлех, мусăк клас кĕрешĕвĕнђе вăйлă хĕçпăшал пулса тănине уççăн кăтартса памаст̆, ђăвашсен револютсиђђенхипе револютси хыççăнхи мусăкне уйăрса, вĕсен уйрăмлăхĕсене татсах кăтартса памаст̆. Йулашкинђен, натсионалисăмла шухăшсенђен те уйăрăлсах çитеймест.

Çапах та вăл мусăк ĕçне миççионерла, клас тăшманле шухăшсенђен тасатас тĕлĕшпе уççăнах, пĕр иккĕленмесĕрех ĕçлет аслă Октăпĕр патша сăнђăрĕсене çапса салатса, ђăваш халăхĕн мусăкне çĕнĕ, ирĕклĕ çулпа ўсме сарлака майсем туса панине курат̆, ђăвашсен револютсиллĕ мусăкне çирĕплетес тĕлĕшпе хастарлăн ĕçлет.

IV

Ф. П. Павлăв пултаруллăхĕ мусăк ĕçĕнђе анђах мар, литтературăра та палăрса тăнă. Ђăваш литтературĕнђе вăл мусăкри пекех паллă вырăн йышăнса тăмаст̆ пулин те, унăн револютси хыççăнах çырнă происветенисем („Йалта“—трамă, „Сутра“—комети, „Капкăнри, ытти хаçат-шурналсенђи фелйеттонĕсем) хаљхи вăхăтра кулленхи кĕрешўри сатађсемпе тађђăнах çыхăнса тăмаççĕ пулин те,—вĕсем Ф. П. Павлăвăн писаттĕл пултаруллăхĕ те, пысăк маçтăрлăхĕ те пуррине, вăл литтературă ĕçĕпе ђăнласах инттересленнине уççăнах кăтартса тăраççĕ. Унăн „Йалта“ трамийĕ—империалисăм вăрçи вăхăтĕнђи йалти пурнăçа, кулакла, йумăçла етемсен тискер ĕçĕсене, çемйе ыйтусене кăтартса пама тăрăшакан происветени—хăй умне лартнă сатађсене çак сатађсем çине вак пуршуаллă иккеленђĕклĕ пăхнипе татса параймаст̆. Ĕçхалăхĕшĕн империаллисăм вăрçи кирлĕ маррине, вăл вăрçа мĕнле пĕтермеллине, кулак пусмăрĕнђен йепле хăтăлмаллине, çемйе ыйтăвĕсене мĕнле татса памаллине—çаксене пролеттари револютси урлă клас тăшманĕсене, кулак йумăç пуп таврашсене çĕнтерсен анђах татса пама пуррине—авттăр кăтартса параймаст̆, вăл хăйĕн тарăхнине палăртнинђен ытла кайма пултараймаст̆. Паллах, „Йалта“ пайанхи пурнăçран тухса ўкнĕ йапала, ăна пурнăç таптаса кайнă.

„Сутра“—вак хресђенĕн харпăрхăйлă çĕмйинђи кулленхи нимĕне тăман вактĕвек йапаласем-ыйтусем пирки пулса иртекен харкашу-йатлаçусем пурнăçа вăйлă саттирăпа çунтарса тухакан комети. Ку пĕђĕк происветени çав вак тĕвеклĕхрен, ђăкăлтăш пурнăçран вирлĕн мăшкăласа кулнипе пĕрех, ăна вăхăтлăха татса пама анђах çул кăтартса парат̆. Хаљхи вăхăтра, пурнăç йăлисенђе çĕннипе кивви вилес пек кĕрешсе, çĕнĕ пурнăç, сотсиалисăмла пурнăç йăлисем çĕнтерсе пынă вăхăтра, пирĕн литтературăна пурнăçăн кайалла туртса тăракан ĕлĕкхи йăлисене клас тăшманĕн кунти тискер ĕçĕсене çунтарса тухакан, çĕнĕ пурнăç тума пулăшакан саттиралла происветенисем, Ф. П. Павлăв пек вирлĕн çунтарса çырнисем, пысăк вăй пулса тăмалла.

V

Ф. П. Павлăв култтурă револютсин пĕр пысăк фронтĕнђе совет влаçĕпе пĕрле хастарлă ĕçлекен пĕр паллă, пултаруллă ăста хутошнĕк пулнă. Унăн револютси хыççăнхи мусăк ĕçĕнђе тунисем ђăваш мусăкне вĕренсе, тарăнлатса, сарса, ăна çĕнĕ йурă-кĕвĕсемпе вăйлатса йарас тĕлĕшпе те, ђăваш ĕçхалăхĕ хушшинђен Октăпĕр револютсипе пĕрле çулăмланса тухнă çĕнĕ пултаруллă вăйсене, çĕнĕ мусăкçăсене çĕнĕ компоситтăрсене вĕрентсе хатĕрлес тĕлĕшпе те—пит пысăк. Ф. П. Павлăвăн ĕçĕ, унăн çулĕ—кашни ĕç интеликентне хăйĕн пĕлўне, хăйĕн мĕн пур пултаруллăхне пролеттари револютсишĕн, сотсиалисăм ĕçĕшĕн, кашни хăйне шанса панă ĕçре тўрĕ вăйа хурса ĕçленипе парса тăмалли çула кăтартса тăрат̆.

Ф. П. Павлăв ĕçленĕ фронт ытла та пысăк, ответлă ĕç фронђĕ. Сотсиалисăм тăвас ĕç пур фронтпа та сарлакан çĕнтерсе пынă вăхăтра, çĕршыва интустриленĕ никĕс çинђе уйрăм йалхуçалăхла ђухăнсемпе вăтамсем татăкланах талккăшĕпе колхос çулĕ çине куçса пынă вăхăтра, пĕтĕм пурнăç йĕрки, авалхи йăла—хăнăхусем, çыннăн шухăш кăмăлĕсем тĕпренех çĕнĕлле сотсиалисăмла улшăнса пынă вăхăтра,—итеолоки фронтĕнђе те, ытти çĕртисенђи пекех, клас кĕрешĕвĕ калама çук ђивĕђ хайар пулса пырат̆.

Мĕн пур искусствăсем-литтераттур, мусăк, йурă, театр, шивописç, т. ыт. те çак клас кĕрешĕвĕнђе пролеттариат аллинђе клас тăшманĕсене çĕнтермелли витĕмлĕ, ђивĕђ хĕçпăшал пулса тăмалла.

Епĕр пĕр ђарăнмасăр, пĕр ывăнмасăр, пĕр вăйа шеллемесĕр пролеттари литтераттурĕшĕн, пролеттари мусăкĕшĕн, пролеттари театăрĕшĕн, пролеттари шивописçĕшĕн кĕрешмелле, пролеттари револютсишĕн, комунисăмшăн кирлĕ искусствă тума пĕђђен-иккĕн уйрăмăн ĕçлесе мар, ĕçхалăх массипе пĕрле çак ĕçсене массăсене темиçе çĕршерĕн, пиншерĕн сарлакан хутшăнтарса литтераттурă, мусăк, театр ĕçне ђăн-ђăн массăллă йухăмсем туса йарса анђах пултаратпăр. Çакна епĕр искуствă фронтĕнђе рапођђисемпе колхоçнĕксем хушшинђен темиçе пиншерĕн çĕнĕ пултаруллă вăйсене палăртса, маркçисла криттĕкпа пољшевикла самокриттĕка вăйлатса, клас тăшманне хирĕç çак кашни искусствăн хăйне уйрăм сăнлă-тĕслĕ хĕçпăшалне йаланах ђивĕђ хăйраса тăрса, вăл хĕçпăшалпа тăшмана йаланах тĕл, вирлĕ çапса çĕмĕрсе тăрса анђах тума пултаратпăр. Çакна тумах пирĕн искусствăра клас тăшманĕ мĕнле тĕрлĕ тумсем тумланса кĕнине, мĕнле ђейен, сасартăках сисĕнмелле мар çўхен кĕрешсе пынине уççăн курса тăма вĕренмелле, çакна тума искусствă ĕçĕнђе—пултаруллăхра та, криттĕкре те—тиалекттĕкла маттериалисăм меттăтне сарлакан çавăрса илсе, унпа усă курма вĕренмелле. Пролеттари искусствине массăпа пĕрле, массă хушшинђе—претприйаттисенђе, колхос хирĕсенђе—искусствăна ђи малта пыракан рапођђи, колхоçнĕк утарнĕксене сарлакан хутшăнтарса туса пымалла

Çак сатађсене епĕр ку таранђђен те кайа йулса туса пыратпăр. Пирĕн, уйрăмăнах мусăк ĕçĕн фронтĕнђе револютси хыççăн ку тарана çитиђђен калама çук нумай пысăк ĕçсем тунă пулсан та, тумаллисем тата та нумайрах.

Епĕр хаљхи вăхăтра пролеттариатăн, пољшевисăмăн ђăнђăн пысăк искусствине тăвас ĕç умне çитсе тăтăмăр. Çак сатађ пирĕн ку таранђђенхи ĕçе тата темиçе хут вăйлатма хушат̆, ĕç майĕсене, ĕç хăвăртлăхĕсене хыттăнах улăштарма хушат̆, искусствăра хутошĕствăллă кађђĕствăшăн, итейă тĕлĕшĕпе çўлерех сыпăка çĕкленессишĕн пĕр ђарăнмасăр, пĕтĕм вăйсемпе кĕрешме хушат̆.

Пролеттари мусăкĕшĕн кĕрешес тĕлĕшпе пирĕн умра пит пысăк ĕçсем тăраççĕ. Вĕсене ăнăçлă тума пирĕн мусăк тĕхнĕккăмĕ вуђахĕ тавра, ђăваш пролеттари писсаттĕлĕсен ассотсиатсийĕпе пĕрле пролеттари мусăк орканисатсийĕн никĕсне хывса, ăна массăллă йухăм туса йарассишĕн çапăçмалла. Мусăк ĕçĕнђе клас тăшманĕпе пĕр ђарăнмасăр кĕрешсе тăрса—кулакла, натсионалисăмла, вак пуршуалла, интивитуалисла шухăш-